27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
16
ШАМАТКУН
183(6678) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Колхозсенчи выльăхсене хĕл каçарма кăтартуллăн хатĕрлемелле

Выльăх-чĕрлĕхе уйхирсемпе улăхсенчен, вăрмантан кĕртсе, витесене çуртĕĕрсене усрамалли вăхăт çывхарать. Çав вăхăта колхозсем мĕнле хатĕрленсе кĕтсе илнинчен выльăх-чĕрлĕх йышĕпе продуктивноçне ÿстересси пысăкран нумай килет.

Пирĕн республикăри нумай колхозсем выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес ĕçе çуркуннерех тытăннă. Выльăх витисемпе çуртĕĕрсене вăхăтра юсаса, çăва каймалла пур туни, выльăх-чĕрлĕх сывлăхне усăллă пулнипе пĕрлех, выльăх апатне те перекетлеме пулăшать.

Çĕрпÿ районĕнчи «Ĕмĕт» колхоз государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне çулран-çул ытлашшипех тултарса пырать. Кăçал та çак колхоз, плана ĕнесен тĕлĕшпе 122 процент, сыснасен ĕнĕпе 115 процент, сурăхсен ĕнĕпе 102 процент, кайăк-кĕшĕк ĕнĕпе 135 процент тултарса, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Колхоз выльăхсене хĕл каçарма пĕтĕмĕшлех хатĕрленсе çитнĕ. Çĕрпÿ районĕнчи нумай колхозсем «Ĕмĕт» колхоз пек ĕçлеме тăрăшаççĕ. Çавăнпа та район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе республикăра мала тухрĕ, Пĕтĕм Союзри çамрăк амăртура ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕ. Районри нумай колхозсем выльăхсене витере усрама тĕплĕн хатĕрленнĕ, хĕл валли апат-çимĕç ытлашшипех пухса хунă, ку тĕлĕшпе халĕ те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Анчах республикăра государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне тултарса пыман районсем те чылай-ха. Çакă вăл, чăн малтанах, выльăхсене иртнĕ çул начар пăхса хĕл каçарнинчен килнĕ. Çавна пула колхозсем чылай сиен курнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçармашкăн апат тата çуртйĕр хатĕрлесе хурасси çинчен» йышăннă постановленире выльăх-чĕрлĕх йышне сыхласа хăварас тата апат-çимĕçе тирпейлĕн тыткалас ĕçре выльăх витисене лайăх юсаса тата çĕнĕрен туса хатĕрлени пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртнăччĕ. Пĕлтĕр хăшпĕр районсемпе колхозсен руководителĕсем выльăх-чĕрлĕх валли лайăх витесем хатĕрлесе хурас ĕç çине çиелтен пăхрĕç, çавна пула чылай выльăхсем, пуринчен ытла çамрăк выльăхсем, хĕлле чылай чирлесе вилчĕç. Кăçал ун пек ан пултăр тесе, Обкомпа Совнарком выльăх-чĕрлĕх витисемпе çуртйĕрĕсене хĕл валли тĕплĕн хатĕрлесе çитерме хушрĕç. Çак постановление йышăннăранпа виçĕ уйăх иртрĕ. Апла пулсан та уйрăм районсем ку тĕлĕшпе питех те сахал ĕçсем тунă-ха. Акă, Куславкка районне илер. Кунта выльăх витисемпе çуртйĕрĕсене районри 58 колхозран 31 колхозра кăна юсама тытăннă. Выльăх витисемпе çуртйĕрĕсене юсас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăсене 26 колхозра çеç тунă, вĕсене те час-часах ытти ĕçе илеççĕ. Райсовет исполкомĕн председателĕ Прытченков, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Крючков юлташсем выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçе çителĕклĕ ертсе пымаççĕ.

Элĕк райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Владельщиков юлташ выльăх витисене юсас ĕç районра мĕнле пыни çинчен пачах та пĕлмест. Кунта кивĕ çуртйĕрсене юсас ĕçпе интересленмеççĕ, çĕнĕрен тăвасси пысăк вырăн йышăнать тесе лараççĕ. Çав вăхăтрах çĕнĕ витесем тăвас ĕç те çителĕксĕр пырать. Паянхи кун тĕлне витесем пурĕ те 361 пуç вырнаçмалăх кăна тунă.

Халĕ ĕнтĕ вăхăт пур-ха, ĕлкĕрĕпĕр тесе, лăпланса ларасси иртрĕ, хĕле хатĕрленессине хĕрÿллĕн тытăнмалла, çак ĕçе пĕтĕм вăя мобилизацилемелле. Выльăх витисемпе çуртйĕрсем çутă та ăшă пулмалла. Витесенчи пĕтĕм шăтăк-çурăксене мăкпа, сÿспе питĕрмелле, тăм сĕрсе ăшăтмалла. Кашни витен мачча пулмалла, витери пăсăк сывлăша кăларса яма трубасем вентиляторсем тумалла. Кашни колхозрах витесем выльăхсене йышăнма мĕнле хатĕррине тĕплĕн тĕрĕслесе тухмалла, çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

Выльăхсем валли витесемпе çуртйĕрсем хатĕрленипе пĕрлех, кашни колхозра выльăх апатне хĕл каçмалăх пухса хурассишĕн те пикенсех ĕçлемелле. Халиччен выльăх-чĕрлĕхе çултăлăк хушши çитермелĕх апат хатĕрлеймен колхозсем пикенсе ĕçлесен, халь те выльăх апачĕ нумай хатĕрлеме пултараççĕ.

Чылай колхозсен çаранĕсем тепĕр хут ÿссе çитĕнчĕç. Шăмăршă, Улатăр, Первомайски, Йĕпреç тата ытти районсенчи колхозсем вăрмансенчи уçланкăсенчен çĕршер тонна утă çулса хатĕрлеме пултараççĕ. Комсомольски, Канаш, Чкаловски районсенчи колхозсен хăй тĕллĕн ÿсекен курăксене çĕршер лав пухма пулать. Йывăç çулçисемпе милĕксем хатĕрлес тĕлĕшпе те пикенсех ĕçлемелле. Çавсемпе пĕрлех, итемсем çинче пухăнакан арпана, молотилкăпа çапнă сĕрте пухăнакан пучахсемпе вакă улăма лайăх тирпейлесе арпалăхсене хумалла. Нумай колхозсем çĕрулми кăларма тытăнчĕç. Çĕрулми аврипе, тымарçимĕçсен çулçисемпе силос тунă çĕрте усă курас пулать.

Силос хывмалли плана пирĕн республикăри районсем тултарнă, анчах районсенче плана тултарман уйрăм колхозсем сахал мар-ха. Силос хывас ĕçе малалла туса пымалла. Плана тултарман пĕр колхоз та пулмалла мар. Анчах выльăх апатне çителĕклĕ хатĕрленипе пĕрлех, ăна виçеллĕ те тирпейлĕ тыткалас пулать. Нумай колхозсен иртнĕ çул выльăх апачĕ çителĕклĕччĕ, анчах хĕлле тирпейсĕр тыткаланипе пула, выльăх апатне часах сапаласа, тăккаласа пĕтерчĕç, çапла вара нумай колхозсем пысăк сиен курчĕç. Выльăх апатне виçсе, ферма заведующийĕсен аллине актсемпе памалла, çитерессе зоотехниксем кăтартнă рацион тăрăх, нормăпа çитермелле. Колхоз председателĕсемпе зоотехниксен выльăх апатне мĕнле расходланине куллен контроллесе тăрас пулать.

Кĕркуннехи йĕпе-сапаллă тата хĕллехи çил-тăманлă вăхăтра çитерме выльăх апатне ферма çурчĕсем çывăхне турттарса тирпейлĕн купаласа хумалла. Çумăр тытман клевер, пăрçа, ясмăк тата ытти курăксемпе улăмсем çине, шыв ан кайтăр тесе, ыраш е тулă улăмĕ витсе хумалла.

Çаксем вĕсем пурте паян тумалли ĕçсем. Халĕ, çумăрсемпе сивĕсем пуçланиччен тумалла та ĕнтĕ çак питех те ответлă ĕçсене. Комсомолăн ялти организацийĕсен фермăра ĕçлекен работниксене пулăшас пулать.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес ĕçе кулленех ертсе пымалла, ăна большевикла тимлĕхпе, кăтартуллăн туса ирттермелле.

Румыни правительствин делегацийĕ Мускавран тухса кайни

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче Мускавран Румыни правительствин делегацийĕ тухса кайнă. Вăл Мускавра Совет Союзĕн, Великобританин тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен представителĕсемпе перемири тăвасси çинчен калаçнă тата перемири çинчен тунă килĕшĕве алă пуснă. Делегацире çаксем пулнă: Государство Министрĕ тата Юстици Министрĕ Л. Патрашкану господин, Шалти Ĕçсен Министрĕн юлташĕ Д. Дамачану генерал, Б. Стирбей господин, Г. Попп господин тата ыттисем те пулнă.

Мускав аэродромĕнче делегацин членĕсене çаксем ăсатса янă: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, Совет Союзĕн Каирти Посланникĕ Н. В. Новиков, генерал-лейтенант В. П. Виноградов тата СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн Заведующийĕн ĕçĕсене туса тăраканĕ Г. И. Фомин.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЛОМЖА хулинчен хĕвеланăçнерехре, тăшманпа çапăçса, нимĕçсен НАРЕВ шывĕн сулахай хĕрринчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне—НОВОГРУД хулине туртса илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, нумай вăхăт хушши вăйлă çапăçнă хыççăн, сентябрĕн 14-мĕшĕнче ВАРШАВА çывăхĕнчи хулана тата нимĕçсен ВИСЛА шывĕн хĕвелтухăç çыранĕнчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне — ПРАГА крепоçне туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă, вăл шутра — ЗЕЛЕНКА, ЗАМБКИ, КАРОЛЮВКА, РЕМБЕРТУВ СТАРЫЙНОВИ, ВИТОЛИН, СЯСКА КЕМПА, ЛЯС, ЗБЫТКИ, РАДОСЕТЬ, МЕДЗЕШИН ятлă пысăк ялсем тата ЗЕЛЕНКА, РЕМБЕРТУ, ВАВЕР ятлă чугун çул станцийĕсем. Унти çапăçусенче поляксен БЕРЛИНГ генерал-лейтенант ертсе пыракан 1-мĕш армийĕн БЕВЗЮК генерал-майор ертсе пыракан 1-мĕш пехотнăй дивизийĕ çапăçнă.

ЖЕШУВ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, ГЕОРГЕ хулипе чугун çул станцине тата ПРАИД хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — МОНАСТИРЕ, ДИТРАУ, РЕМЕТЯ, ЛАЗАРЕА, ЖОСЕНИ, КОРОНД, КЮШМЭД, МЕДИШОР ятлă пысăк ялсем тата ГАЛАЦАШ, ВАРВИЗ, ДИТРАУ, ЛАЗАРЕА ятлă чугун çул станцийĕсем.

Румынин вăтаçĕрти пайĕнче пирĕн çарсем ТУРДА хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—МАРОШ-БОГАТ, МАРОШ-ЛУДАШ, ОКНА-МУРЕШ УЛУЙ, ИЗВОАРЕЛЕ ятлă пысăк ялсем тата МАРОШ-БОГАТ, МАРОШ-КЕЦЕ, РЭСБОЙЕНИ, ХЭРАСТЕШ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 27 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 17 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ БУДАПЕШТ ХУЛИНЕ ЙЫШЛĂН ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПАННИ

Сентябрĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Венгри столицине — Будапешт хулине йышлăн вĕçсе кайса тапăннă. Тĕллев çине тÿп-тÿрех вĕçсе тухса, пирĕн самолетсем тăшманăн вăрçăпа промышленность объекчĕсем çине — кивĕ крепоçăн, çар казармисен, машина тăвакан заводăн, газ завочĕн тата ытти заводсен районĕ çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула 25 тĕлте вăйлă пушар тухнă. Пушарсенче взрывсем пулнă. Пушар çулăмне пирĕн летчиксем каялла таврăннă чухне 200 километртан та курнă.

☆ ☆ ☆

Ломжа хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Новогруд хули районĕнче Нарев шывĕ хĕррине хĕстерсе лартнă тăшман хаяррăн хирĕç тăнă. Унта нимĕçсем умлăн-хыçлăн çичĕ хут контратака тунă, анчах та совет боецĕсене малалла кайма чарайман. Пĕр часть Монствица ялне туртса илнĕ чухне 600 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ, 6 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен туппа пĕтерсе тăкнă. Пирĕн çарсем, тăшмана хĕвелтухăç енчен тата кăнтăр енчен вăйлăрах та вăйлăрах пырса çапса, тăшман группировкине аркатса тăкнă та Новогруд хулине туртса илнĕ. Çĕмĕрсе тăкнă нимĕç çарĕсен юлашкисем Нарев шывĕ урлă ишсе каçма тытăннă, анчах вĕсене пирĕн артиллерипе пулеметсем персе тăнă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем нумайĕшĕ шыва путса вилнĕ.

* * *

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсем хаяррăн çапăçнă хыççăн Прага крепоçне — Висла шывĕн сылтăм хĕрринче Варшавăпа юнашар ларакан хулана—туртса илнĕ. Варшава патĕнчи çирĕплетнĕ районри хăватлă оборона сооруженийĕсемпе усă курса, нимĕçсем хытă хирĕç тăнă. Совет çарĕсем тата вĕсемпе пĕрле кĕрешекен поляксен 1-мĕш армийĕн чаçĕсем тăшман оборонине татнă та, утăм хыççăн утăм малалла куçса пырса, укрепленири гитлеровецсене хĕсе-хĕсе кăларнă. Çĕрĕпе çапăçнă, час-часах алă вĕççĕн те тытăçа-тытăçа илнĕ. Паян ирхине совет чаçĕсемпе поляксен 1-мĕш армийĕн чаçĕсем Прага крепоçне штурмласа туртса илнĕ. Прагăшăн çапăçнă чухне темиçе пин гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн танкĕсене, хăй тĕллĕн çÿрекен тупписене тата хир тупписене нумай пĕтерсе тăкнă. Хĕçпăшал, складсем тата çар япалисен эшелонĕсене тытса илнĕ.

Пирĕн авиаци çĕр çинчи çарсене тăшманпа çапăçма хытă пулăшса пынă. Совет летчикĕсем, бомбăсем пăрахса тата штурмласа, тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен йывăр сухату тÿстерессĕ.

* * *

Жешув хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшмана хирĕç çапăçнă. Нимĕçсем кунта хăйсен пехотин тата танкĕсемпе артиллерин самаях пысăк вăйĕсене куçарса пынă та татти-сыпписĕр контратака тунă. Тăшман контратакисене пурне те сирсе янă. Пуринчен те хаяртарах çапăçусем Кобыляны ялĕнчен хĕвеланăçнерехре пулса иртнĕ. Пирĕн çарсем тăшмана халран кăларнă хыççăн хăйне хирĕç вăйлă пырса çапнă та лайăх позицисем туртса илнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен пехотине пĕр полка çити вĕлерсе пĕтернĕ, 15 танк, 40 тупă, 130 пулемет тата çар хатĕрĕсем тиенĕ 120 лава пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет çарĕсем малалла кайнă та темиçе ял туртса илнĕ.

* * *

Румынин вăтаçĕрти пайĕнче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Турда хули районĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Тăшман хăйĕн унти группировкине çĕнĕрен пĕр танковăй тата икĕ пехотнăй дивизи хушса панă та темиçе хутчен те пирĕн çарсем малалла куçассине чарса лартма хăтланнă. Хĕрлĕ Çарăн тата Румыни чаçĕсем нимĕçсемпе венгерсен çарĕсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та, Ариешул шывĕ урлă каçса кайса, Турда хулине штурмласа туртса илнĕ. Турда хули Трансильванин Клуж ятлă тĕп хулинчен 25 километртра ларать. Тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату кÿнĕ. Нимĕçсемпе венгерсен 900 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Тепĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем тусем çинче аякран кайса çавăрса илмелли маневр тунă та тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ позицине татнă. Совет çарĕсем 20 дотпа дзот ишсе антарнă, 400 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Мариамполь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн разведка отрячĕсем гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн боецсен пĕр ушкăнĕ, гварди сержанчĕ Макеев ертсе пынипе, çĕрле тăшман тăракан вырăна кĕрсе кайнă та нимĕçсен пулемет расчетне тапăннă. Нимĕçсен пĕр пулеметчикне пирĕн разведчиксем вĕлерсе пăрахнă, иккĕмĕш пулеметчикне пулемечĕпе пĕрлех хăйсен подразделенине илсе таврăннă.

* * *

Çурçĕр флочĕн авиацийĕ Баренц тинĕсĕнче тăшманăн 2.000 тонна таякан транспортне тата тепĕр хурал катерне шыва путарнă.

Çурçĕр флочĕн торпеда катерĕсем çĕрле тăшманăн миноносецне тата хурал карапне атакăласа шыва путарнă.

Совет Союзĕпе Ирак дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçлани

Ирак Правительстви Совет Правительствине пĕр-пĕринпе дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçлама тата пĕр-пĕрин патне дипломатиллĕ представительсем яма сĕннине Совет Правительстви йышăннă.

1944 çулхи августăн 25-мĕшĕнче Иракăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Аршад аль-Умари господин СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ патне çакăн пек телеграмма янă:

«Ирак посланникĕ тата Совет Правительствин Тегеранри представителĕ пĕр-пĕринпе калаçнă тăрăх тата Иракпа Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе дипломатиллĕ çыхăнасшăн пулнине шута илсе, эпĕ Сирĕн Превосходительствăна çакăн çинчен хаваслансa пĕлтеретĕп: Унăн Величествин Правительстви çавăн пек çыхăну тытма пуçлама тата пĕр-пĕрин патне дипломатиллĕ представительсем яма йышăнчĕ. Икĕ правительство та хăйсен представителĕсене пĕр-пĕрин патне часрах яччăр тетĕп эпĕ. Совет çарĕсем, мĕнпур чаплă çарсем, халăхсене ирĕке кăларассишĕн кирек хăçан та чи пысăк жертвăсем тÿснĕскерсем, çав тери вăйлă тăрăшса çĕнтерсе пынă тапхăрта Сире çавăн çинчен пĕлтересси маншăн питĕ хаваслă ĕç пулса тăрать. Çак майпа усă курса, эпĕ Сирĕн çĕршыва пĕтĕм чунтан-чĕререн телей сунатăп, Сирĕн Превосходительствăна эпĕ хам питĕ хисепленине ĕненме ыйтатăп».

Çак телеграммăна хирĕç СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Аршад аль-Умари господина çакăн пек телеграмма янă:

«Министр господин, эпĕ Сирĕн августăн 25-мĕшĕнче янă телеграммăра илни çинчен пĕлтеретĕп.

Эсир совет çарне çав тери кăмăлласа хисепленине Совет Союзĕн Правительстви пысăка хурать. Ирак Правительстви Совет Союзĕпе Ирак хушшинче дипломатиллĕ çыхăну пуçласа яма сĕннине Совет Правительстви савăнса йышăнать.

Совет Правительстви çак вăхăтран вара Совет Союзĕпе Ирак хушшинче дипломатиллĕ çыхăну пуçланса кайнă тесе шутлама килĕшет тата кĕске срокрах пĕр-пĕрин патне посланниксем яма хатĕр».

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва сарса ярасси çинчен

Мускаври Сталин ячĕпе тăракан автомобиль завочĕн коллективĕ Совет Союзĕнчи предприятисенчи мĕнпур рабочисене, инженерсемпе техниксене тата служащисене пирĕн социализмлă промышленноçра çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн, кашни заводпа фабрикăна, кашни предприятие кăтартуллăн ĕçлеттерессишĕн Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва организацилеме чĕннине профессиллĕ союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕн Президиумĕ ырланă.

ВЦСПС профсоюз организацийĕсене çакăн пек тума хушнă: предприятисемпе цехсенче Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту çинчен сÿтсе-явса обязательствăсем илме рабочисемпе служащисен пухăвĕсене ирттермелле; Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă çынсене хăйсем илнĕ обязательствăсене тултарас тата ирттерсе тултарас ĕçре кулленех пулăшса тăмалла; резервсем тупса парас тата производствăн кая юлакан участокĕсене малтисем патне илсе çитерес ĕçре рабочисемпе служащисен пуçарулăхĕпе анлăн усă курмалла; мала тухнă рабочисен ĕç меслечĕсемпе çитĕнĕвĕсене ытти рабочисем хушшинче хăвăртрах сармалла.

ВЦСПС Президиумĕ мĕнпур профсоюз организацийĕсене, мĕнпур рабочисемпе служащисене тата инженерсемпе техниксене Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăвăн ялавне çÿле çĕклеме, Октябрьти социализмлă аслă революци 27 çул тултарнине ĕç тухăçлăхне тата ытларах ÿстернипе, технологие лайăхлатнипе, хĕле кăтартуллăн хатĕрленсе çитнипе, ĕç дисциплинине пур майпа та çирĕплетнипе, пирĕн Тăван çĕршывăн çарпа хуçалăх хăватне малалла ÿстерсе янипе палăă тума чĕннĕ.

Канашри вагонсем юсакан заводра

КАНАШ, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводăн пур цехĕсенче те Мускаври Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ завод коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва организацилеме чĕнсе каланине пысăк çĕкленÿпе сÿтсе-яваççĕ. Цехсем аслă уява пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илме çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ.

Завод коллективĕ производство планне ирттерсе тултарма, рационализациллĕ сĕнÿсене ĕçе кĕртсе 250 пин тенкĕ перекетлеме, техникăллă вĕренĕве 500 çынран кая мар явăçтарма, электроэнергипе топливăна 3 процент ытла перекетлеме, хĕле тĕплĕн хатĕрленме тата ытти нумай ĕçсене пурнăçа кĕртме сăмах пачĕ.

Рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем çак обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухрĕç.

О. АЛТУНИН,
Завком председателĕ.

Планран ирттерсе 400.000 тенкĕлĕх продукци туса кăларассишĕн

Шупашкарти ликер заводĕнчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксем тата служащисем Сталин ячĕпе тăракан завод коллективĕ чĕнсе каланине сÿтсе-яврĕç. Рабочисем, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Вĕсем 10 уйăхри плана срокчен тултарса, аслă уявччен планран ирттерсе 400.000 тенкĕлĕх продукци туса кăларма, СССР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссарначĕн заданине срокчен пурнăçа кĕртме, 10 уйăх хушшинче ĕç тухăçне 10 процент ÿстерме, продукци хакне 5 процент йÿнетме, топливăпа электроэнергие планпа пăхнинчен 5 процент ытларах перекетлеме сăмах пачĕç.

Рабочисен техникăллă пĕлĕвне çĕклес шутпа, пур рабочисене те вĕренĕве явăçтарма палăртнă. Подсобнăй хуçалăхри пахча-çимĕçсене тăкаксăр пухса кĕртме, завода хĕле тĕплĕн хатĕрлеме решени йышăннă.

Августри плана ирттерсе тултарнă хыççăн

КУКЕÇ, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри артельсенчен чылайĕшĕсем август уйăхĕнчи производство планне ирттерсе тултарчĕç. Çапла, Шурккари артель 200 процент, Çĕньял Уйкасри артель 181 процент, Заводская ялĕнчи артель 150 процент тултарнă.

Асăннă артельсен коллективĕсем, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăйсен ĕçне лайăхлатма сăмах панă.

Медицина работникĕсен хисеплĕ задачисем

Виçĕ кун каярах участоксенчи врачсен республикăри съезчĕ пулса иртрĕ. Съезд халăха медицинăпа санитари тĕлĕшĕнчен пулăшас енĕпе вăрçă вăхăтĕнче туса ирттернĕ ĕçсене пĕтĕçтерсе тухрĕ тата çав ĕçе малалла лайăхлатмалли майсене палăртса хăварчĕ. Съезд республикăри медицина работникĕсене халăх сывлăхне сыхлассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлеме чĕнчĕ.

Участоксенчи врачсен республикăри съезчĕ палăртнă мероприятисем — медицина работникĕсен хальхи тапхăрти ĕç программи пулса тăраççĕ. Вĕсем партипе правительство сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен органсем умне лартнă задачăсенчен, фронтпа çĕршыв интересĕсенчен тухса тăраççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ республикăри медицина работникĕсен, — сестрасенчен пуçласа пысăк квалификациллĕ специалистсем патне çити, — пурин те хăйсен пĕтĕм пĕлÿлĕхĕпе пултарулăхне съезд палăртнă мероприятисене çывăх вăхăтрах пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешнĕ çĕре памалла.

Партипе правительство халăх сывлăхне сыхлассишĕн ялан тимлĕн тăрăшнине пула, медицина работникĕсем Отечественнăй вăрçă çулĕсенче çĕнĕ çитĕнÿсем турĕç. Вăрçă çулĕсенче фронтра та, тылра та ерекен чирсем сарăлни пулман. Аманнă офицерсемпе боецсенчен 80 процент таран госпитальсенче сывалнă хыççăн Хĕрлĕ Çар ретне таврăнаççĕ. Фронтри медицина работникĕсем Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă воинĕсен сывлăхĕпе пурнăçĕшĕн пĕтĕм вăя хурса тăрăшаççĕ. Тылри медицина работникĕсем те, актив çине таянса ĕçлесе, халăх сывлăхне сыхлассине, чирлисене сыватассине чылаях лайăхлатрĕç, санитари культурине малалла çĕклесе пыраççĕ.

Тылри медицина работникĕсем вăрçă вăхăтĕнчи тĕрĕслĕве чыслăн тÿссе ирттернине нумай больницăсемпе врач пункчĕсен ĕçĕсем уçăмлăн çирĕплетсе параççĕ. Акă, Елчĕк районĕнчи больницăна илер. Унта 30 çын ытла ĕçлет. Вĕсем пурте отличниксемпе ударниксен ятне илме тивĕçлĕ пулнă. Вĕсен хастарлă ĕçĕ пĕтĕм больница ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек йĕркелеме май панă. Больница коллективĕ, чирлисене сыватас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçленипе пĕрлех, ĕççыннисем хушшинче санитари культурине сарассишĕн, халăха ерекен чирсенчен сыхлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Кун пек лайăх ĕçлекен больницăсене тата та илсе кăтартма пулать.

Анчах тунă çитĕнÿсем республикăри медицинăпа санитари учрежденийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртмасăр хăвармаллине пĕлтермеççĕ-ха. Халăха медицинăпа санитари тĕлĕшĕнчен пулăшас ĕçе пур çĕрте те лайăх йĕркелес тесен, малта пыракансен опытне сарнипе пĕрлех, çитменлĕхсене палăртса, вĕсене сиенчех пĕтерме татăклă мерăсем йышăнни кирлĕ. Участоксенчи врачсен республикăри съезчĕ хăшпĕр районсенче, уйрăмăн илсен, Элĕк, Етĕрне, Кувакино районĕсенче, халăх сывлăхне сыхлас ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек йĕркелеменнине, чылай учрежденисенче çитменлĕхсене пĕтерессишĕн тăрăшманнине тата медицина работникĕсем трахома, кĕçĕ, маляри, туберкулез чирĕсене пĕтерессишĕн çителĕксĕр кĕрешнине палăртрĕ. Трахомăпа кĕрешес ĕçе пĕтĕмпех сестрасем çине хурас йăла хытă сарăлнă. Вăл ĕçе фельдшерсем, врачсем тивĕçлипе хутшăнмаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ чылай çĕрте трахомăна пĕтерес ĕç сÿрĕк пырать.

Медицина работникĕсен ĕççыннисен ыйтăвĕсене вăхăтра та лайăх тивĕçтерме яланах хатĕр пулмалла.

Халăх сывлăхне сыхласси, ĕççыннисене медицинăпа санитари тĕлĕшĕнчен пулăшасси — государство ĕçĕ пулса тăрать. Çав ĕçе лайăх организацилеме пирĕн условисемпе майсем çителĕклĕ. Медицина работникĕсен паянхи хисеплĕ задачисенчен пĕри вăл—ялти врач участокĕсен ĕçне, фельдшерпа акушерка пункчĕсен, трахома пункчĕсен ĕçне, ача çуратмалли çуртсен, ача яслисен ĕçне çирĕп йĕрке тăрăх организацилесси пулать. Санитари паспорчĕсене тирпейлĕ çырса пымалла, çакă вăл ерекен чирсем сарăлассинчен сыхлама пулăшать. Трахомăпа, сивĕ чирпе, кĕçĕпе чирлекенсене пĕтĕмпех шута илсе, вĕсене пурне те чирсенчен сыватма явăçтармалла. Отечественнăй вăрçă инвалидчĕсене пулăшас ĕçе лайăхлатас пулать.

Медицина работникĕсен стационарсемпе амбулаторисенче чирлисене сыватас ĕçе кирлĕ пек йĕркелемелле. Врач хушнисене вăхăтра пурнăçа кĕртес пулать, чирлисене апатлантарас ĕçе тĕрĕс йĕркелемелле, ĕçре çĕнĕ майсемпе ытларах усă курмалла. Уйрăмăнах ачасемпе ача амăшĕсен сывлăхне сыхласси çине тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать. Пирĕн совет çĕршывĕнче кашни ача çирĕп сывлăхлă çын пулса çитĕнмелле.

Сывлăх органĕсен, медицина работникĕсен ĕçри квалификацине тата культурине ÿстерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле. Больницăсенче, врач участокĕсенче, районсенче наукăпа практика ыйтăвĕсемпе конференцисем ирттермелле, вĕсенче консультацисем пама пысăк квалификациллĕ специалистсене явăçтармалла. Медицина учрежденийĕсенчи работниксем хушшинче политикăллă воспитани ĕçне татăклăнах лайăхлатса, вĕсене пурне те социализмлă ăмăртăва явăçтарас пулать. Ăмăртăвăн тĕп тĕллевĕ—халăх ыйтнине тимлĕн тивĕçтерсе пымалла тăвасси пулать.

Пур çĕрте те эмелсене, сурансене çыхмалли материалсене перекетлĕн тыткаламалла, оборудованисемпе, инвентарьпе тирпейлĕн усă курмалла. Сывлăх работникĕсем вырăнти ресурссемпе ытларах усă курассине организацилеме тивĕçлĕ.

Халăха медицинăпа санитари тĕлĕшĕнчен пулăшас ĕçе çÿллĕ пусăма çĕклесси врачсемпе больницăсен хисепне ÿстернинчен кăна мар, ĕççыннисене санитари культурине пăхăнма вĕрентнинчен те нумай килет. Ĕççыннисене килте те, производствăра та таса пурăнма вĕрентес ĕçе пĕр медицина работникĕсен вăйĕпе кăна пурнăçа кĕртме йывăр. Ку енĕпе медицина работникĕсене партипе комсомол, профсоюз организацийĕсен, çутĕç работникĕсен пысăк пулăшу памалла. Санитари пропагандине пĕтĕм культурăллă-массăллă ĕçĕн планне кĕртмелле. Мĕншĕн тесен çакă вăл культурăн пĕр пайĕ пулса тăрать.

Медицина учрежденийĕсене халех хĕллехи вăхăтра ĕçлеме хатĕрлесе çитерес пулать. Ку тĕлĕшпе медицина работникĕсене партипе совет организацийĕсен, хуçалăх руководителĕсен нумай пулăшмалла. Больницăсемпе врач участокĕсем, трахома пункчĕсем валли вутă, апат-çимĕç çителĕклĕ пултăр. Суту-илÿ организацийĕсен сывлăх организацийĕсем валли государство паракан таварсемпе продуктсене кирлĕ çĕре вăхăтра çитерсе тăма тăрăшмалла.

Халĕ, Отечественнăй вăрçăн татăклă тапхăрĕнче, медицина учрежденийĕсен мĕнпур ĕçне ĕççыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесе большевикла организацилес пулать. Çакна тума тивĕçлĕ те ĕнтĕ медицина работникĕсем!

Финляндири Министрсен Совечĕн Председателĕн А. Хаксель господинăн сывлăхĕ çинчен пĕлтерни

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче, 19 сехетре, Хаксель господинăн сасартăк сылтăм аллипе сылтăм ури ĕçлейми пулса ларнă, Хаксель хăй калаçайми пулнă. Юн тапăмĕ 235/120. Чĕри лайăххах ĕçлет.

Çак паралич пĕтĕмĕшле артериосклероз пирки тата юн ытла вăйлă тапнă пирки миме ăшне юн юхса кĕнипе пулнă.

Хаксель господинăн сывлăхĕ халь начар.

Профессор-невропатологсем: А. М. ГРИНШТЕЙН,
А. О. ХАЧАТУРОВ,
профессор-терапевт Д. А. БУРМИН. (ТАСС).

Ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те анăçлăн вĕçлессишĕн, государство умĕнчи мĕнпур парăмсене парса татассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлер!

ПАЯН ТУМАЛЛИ ĔÇСЕМ

Вăрăхлăх курăксене вырса пухасси

Кăçал республикăри колхозсем чылай пысăк лаптăк çинче вăрăхлăх курăксене вырса пухмалла. Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне вара 56,2 процентне кăна вырса пухнă.

Советски, Ишлей районĕсенчи колхозсем вăрăхлăх курăксене вырса пухас ĕçе пĕтĕмпех вĕçленĕ. Сĕрпÿ, Чурачăк, Вăрмар, Октябрьски, Вăрнар, Шăхасан районĕсем те ку ĕçе вĕçлесе пырассĕ.

Анчах та Улатăр районĕ 10 процент, Йĕпреç районĕ 15,2, Кувакино районĕ 9 процент, Комсомольски районĕ 24,7 процент, Первомайски районĕ 14,4 процент, Шăмăршă районĕ 32 процент кăна вырса пухнă. Вăрăхлăх курăксене пухас ĕç [illegible] Калинино, Шупашкар районĕсенче те [illegible]. Калинино районĕ 44 процент, Шупашкар районĕ 44,1 процент кăна вырса пухнă.

Курăк вăрăлăхне кашни колхозăн хăйне валли кăна мар, государства сутма та хатĕрлемелле. Вырса тиитнĕ хыççăнах вăрăхлăх курăксене çапса шĕкĕлчеме тытăнмалла.

Махорка касса пухасси

Республикăри чылай колхозсем махорка лартса тăвассĕ. Калинино районĕ 326 гектар çинче махоркăна касса пухнă, çапла вара ку ĕçе кунта вĕçленĕ. Вăрнар, Красноармейски, Сĕрпÿ, Çĕмĕрле районĕсенчи колхозсем те çак ĕçе анăçлă пырать. Кунта 85—95 процент таран касса пухнă.

Анчах та Тăвай, Чурачăк, Пăрачкав районĕсенче çак ĕçе пачах пуçăнман тытăнман. Улатăр, Комсомольски районĕсенче [illegible] пухман. Улатăр районĕ 112 гектар, Комсомольски районĕ 70 гектар ытла пухмалла.

Махоркăна касса пухас тата типĕтсе государствăна парас ĕçе халех вĕçлеме тăрăшмалла. [illegible]

Государствăна йĕтĕн парасси

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă тăрăх, пирĕн республикăри йĕтĕн акакан колхозсем государствăна йĕтĕн [illegible] процент тултармалла. Анчах та сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне [illegible].

[illegible]

Фронтри пек ĕçлесçĕ

ВĂРНАР. Района Оборона Государственнăй Комитечĕ [illegible].

[illegible]

[illegible] аванс шучĕпе тырă илнĕ тата хăйĕн çывăх юлташĕсене 50-шар килограмм валеçсе панă.

В. ШАХАЛОВ.



Укерчĕк çинче: Колхозсем государствăна пама Вăрмарти элеватора тырă илсе пынă.

С. ФРИД фотоÿкерчĕкĕ.

„Победа" колхоз мĕншĕн юлса пырать?

ШАХАСАН, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Паянхи куна районри 52 колхозран 18-шĕ государствăна тырă парса татрĕç. «Красный партизан», «Активист» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем, кăçалхи çулшăн тырă парса татса, 1945 çулшăн леçессĕ. «Трактор» колхоз государствăна тырă памалли плана 120 процент, «Парижская Коммуна» колхоз 107 процент тултарнă.

Çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсем тÿсме çук юлса пырассĕ. «Победа», «Оборона» тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе плана 42—66 процент çеç тултарнă. «Победа» колхозра туртăм вăйĕ ытти колхозсенчи чухлех. Юлса пынин мĕнпур сăлтавĕ те — ĕçе кирлĕ пек йĕркелеменнинче, ĕç дисциплини япăххинче. Колхозниксем ĕçе ирхине 8—9 сехетре тухассĕ те 6—7 сехетре ĕçрен таврăнассĕ. Çапла вара кулленхи нормăна та тултараймассĕ. Сăмахран, сентябрĕн 9-мĕшĕнче 5-мĕш бригадăра 22 çын пĕр гектар чухлĕ те тырă вырайман. Хăшпĕрисем тата пачах ĕçе тухмассĕ. Çав кун колхозра 20 çын ĕçе тухман. Çапла сÿрĕк ĕçленине пула ĕнтĕ колхозăн вырмалли тырă тата 63 гектар юлнă. Ытти ĕçсем те çав хăвăртлăхпах пулса пырассĕ. Паянхи куна çитсе 32 процент çеç кĕлте турттарнă, кĕртырри акмалли плана çуррине те тултарман.

В. ВЕСЕЛОВ.

Государствăна çĕрулми парассĕ

СОВЕТСКОЕ, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра государствăна тырă парса татнă колхозсен йышĕ ÿссех пырать. Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне 15 колхоз государство умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе пурнăçларĕç.

Чемей ялсоветĕнчи «Сеятель» колхоз (председателĕ Андреев юлташ) государствăна пуринчен малтан тырă парса татрĕ. Августăн 23-мĕшĕ тĕлне кĕраки туса пĕтерчĕ, клевер çапса пуçтарчĕ. Кантăр татса хутрĕ, вăррине государствăна парса татрĕ.

Çавăн пекех Исментерти «Радио» колхоз та (председателĕ Чаканов юлташ) уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн туса пырать. Кунта сентябрĕн 13-мĕшĕ тĕлне кĕлте турттарса капана хывса çитернĕ, государствăна тырă тата ытти парăмсем те парса татнă.

Малта пыракан ытти колхозсем те, тырă памалли обязательствăна пурнăçласа, государствăна çĕрулми пама тытăнчĕç. «Майăн 1-мĕшĕ» колхозран паян 6 лавпа çĕрулми леçме кайрĕç. Çавăн пекех «Металлист», «Урожай», «Пучах» тата Хурамал ялсоветĕнчи колхозсем те çĕрулми парас тĕлĕшпе пикенсе ĕçлессĕ. Çапла, малта пыракан колхозсем государствăна 50 тонна çĕрулми леçсе панă та ĕнтĕ.

Анчах хÿрере çапкаланса пыракан колхозсем те çук мар-ха. Сăмахран, «Сатурн», «Красный Октябрь», «Самолет» колхозсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе графика тултарса пымассĕ.

М. ПРОХОРОВ.

Ваттисемпе çамрăккисем те ĕçре

СĔНТЕР. Юнгăри Войков ячĕпе тăракан колхоз кăçал тырпулсене пухса кĕртес ĕçре малта пырать. Кĕрхи тырăсене 5 кунта вырса пĕтернĕ. Çак кунсенчех çуртырăсене те вырса пĕтерессĕ. Тырă вырса пухас ĕçре А. Бархаткина, Яргунькина, Романова юлташсем лайăх ĕçлессĕ, вĕсем кулленхи ĕç нормине яланах 2 хут ытла тултарса пырассĕ. Ватă колхозниксем В. Шурнеев, Г. Куликов юлташсем капан тунă çĕрте итемрен кĕмесĕр ĕçлессĕ. Н. Фролова ертсе пыракан шкул ачисен отрячĕ пучахсем пухнă çĕрте ĕçлет. Вĕсем юлашки вăхăтра çеç 168 килограмм пучах пухса пачĕç. Çапла ваттисем те, çамрăккисем те фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра пĕтĕм вăя хурса ĕçлерĕç.

П. ФРОЛОВ.

Асран кайми фактсем

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пирĕн çĕршывшăн тăшманла государствăсем хушшинче Антонеску Румынийĕ ăраснах паллă вырăн йышăнса тăчĕ. Территорийĕпе пирĕн Мускав облаçĕ пысăкĕшĕскер, Румыни, Германин чи шанчăклă союзникĕ пулса, пирĕн çĕршыва калама çук пысăк сиен кÿчĕ. Вăл, фашистла Германие юлашки вăхăтчченех çар тăратса, нефть т. ыт. продуктсем парса, пирĕн халăха хирĕç вăрçă вăрçма пулăшса тăчĕ.

Иртнĕ виçĕ çул хушшинче эпир фронтра румынсемпе сахал мар тĕл пулкаланă. Румын дивизийĕсене эпир сахал мар ватнă. Румын салтакĕсем, тĕттĕмскерсем, офицерсен çупкисене пĕр сăмахсăр чăтакансем, вăрçă ĕçĕнче питех ăста мар. Ахальтен мар вĕсен минометчикĕсене пирĕн салтаксем «мимометчиксем» тетчĕç. Анчах çарату ĕçĕнче Антонеску шайкки самаях ăста пулнă. Вĕсем совет çыннисен çийĕнчен пур пусма-тавар тумтирĕсене те сĕве-сĕве илнĕ. Килĕсенче тăраниччен хура çăкăр çисе курманскерсем, кунта çупа какай кÿпĕниччен çинĕ, пирĕн колхозсен тырри-пуллине çĕртнĕ, выльăх-чĕрлĕх пуса-пуса тăкса, çисе яраймасăрах сая ярса пĕтернĕ. Вĕсем нимĕçсемпе пĕрле Прут шывĕнчен пуçласа Атăл çине çитнĕ. Çак аслă çул çинче вĕсем вăрăлла хăтланни çинчен пурте пĕлессĕ.

Румын халăхне çакăн пек аслă вăрçа кĕртсе янă Антонескусем, паллах, вĕтшакăр вăрăсем мар. Вĕсем, Гитлер ирĕкĕпе, пирĕн совет Молдавине, Украинăна (Буг шывĕ таран) ярса илнĕ те, «Аслă Румыни государстви» пекки туса хунă. Буг шывĕ тăрăх вĕсем «государство» чикки тунă. Ку чикке хăйсен пограничникĕсене тăратнă. Ку «государствăра» пуçлăхсем те вĕсемех пулнă. Антонеску вара ку таранччченех Гитлерăн шанчăклă йытти пулса пурăнчĕ.

Вăхăтлăха тытса илнĕ Совет Молдавийĕпе Украина районĕсенче Антонеску шайкки виçĕ çул хушшинче пĕтĕмпех çĕнĕлле йĕркесем туса хунă. Кунта нумай шкулсене хупса витесем тунă. Вăхăтран йĕркеленĕ сайра шкулсенче — румын чĕлхине, вырăс историйĕ вырăнне румын историне вĕрентнĕ. Пирĕн аслă литература вырăнне Румынири Антонеску хыççăн çуллакан Крулеску пек тĕшмĕш поэтсем çинчен вĕрентнĕ. Украинецсемпе молдавансем совет влаçĕ панă хăйсен национальлĕ прависене пĕтĕмпех çухатнă. Вĕсем хура ĕçре çеç патак тÿссе ĕçлеме пултарнă. Халăх çурăмĕ тăрăх резина патак çÿренĕ. Пирĕн районсене пĕтĕмпех тĕттĕмлĕх пусмăрласа илнĕ.

Вĕсем хăйсем пуç пулса тăнă районсенчен колхоз выльăхĕсене кунĕн-çĕрĕн Румынине кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе ăсатнă, эшелонĕпе тырпул ăсатнă. Ку районсенчен шăпăр айне мĕн лекнине пĕтĕмпех Румынине шăлса кайнă. Табак, сÿс, çăм, килти япаласем, тумтир, атă-пушмак, пианинăсем, хуткупăссем, çĕвĕ çĕлемелли машинăсем, патефонсем тата ытти те. Тĕслĕхрен, Ананьев уездĕнчи префектура пуçлăхĕ отставной полковник хăйĕн префектуринче пĕр выльăх, пĕр хур-кăвакал, пĕр пианино, хуткупăс, çĕвĕ çĕлемелли машина та хăварман. Пĕтĕмпех Румынине ăсатнă. Ку та сахал. Çак 60 çултан иртнĕ старик, ямăт пурнăçпа асса кайса, хăй валли кашни кас çĕнĕрен çĕнĕ хĕрсем илсе пыртарнă.

Çак Ананьев хулине пĕрре Антонеску пынă. Антонескуна хулари инкубаторнăй станцине илсе кайса кăтартнă. Хăйне маршал текенскер, Антонеску электричествăпа чĕпсем кăларнине курсан, тĕлĕнсех ÿкнĕ, ниçтан та ĕненесшĕн пулман, ку фокус пулĕ, тенĕ. Юлашкинчен, Антонеску, çак инкубатора тĕлĕнмелле япала вырăнне хурса, пĕтĕмпех Румынине куçарттарнă.

Пирĕн çĕнтерÿллĕ Хĕрлĕ Çар Румыни чиккисем патне пырса çитнĕ май, Румынин хăшпĕр пуçлăхĕсем тăна кĕре пуçланă. Одесса хулинче вырăсла чĕлхепе кăларса тăнă «Одесская газета» тата «Буг» хаçатсенче вĕсем хăйсене хăйсем вырăссем умĕнче айăпсăр айвансем пек кăтартма тăрăшнă. «Эпир Россия кун пек вăйлине пĕлмен», «эпир хамăр государство чиккине çеç хÿтĕлетпĕр!»—тесе çырассĕ вĕсем. Анчах камран хÿтĕленĕ-ха вĕсем ăна? Эпир вĕсем çине тапăнманччĕ пулас. Антонеску, Гитлерпа пĕрле, пирĕн çине тапăннине эпир лайăхах астăватпăр-ха!

Нумаях пулмасть, Румынире Антонеску режимĕ ишĕлсе аннă. Унта çĕнĕ правительство тунă. Вăл правительство Антонеску шайккине хирĕç пулнă çынсенчен тăрать. Ион Антонеску хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне тупрĕ — ăна арестленĕ.

Вăхăт çитĕ, вĕсен хуçине Гитлера та хăйне тивĕçлĕ вырăна кĕртсе лартĕç.

В. АХТУПАЙ.

ÇАПАСУРИ ÇАР.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ сентябрĕн 13-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Гавр хулине союзниксен çарĕсем йышăннă. Бельги çыранĕсенче Берн хулипе Зеебрюгге хули хушшинчи района тăшманран тасатса пырассĕ. Альберт каналĕ хыçĕнче союзниксен çарĕсем каллех малалла кайнă. Льеж хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Эбен Эмаэль фортне туртса илнĕ. Льежран хĕвелтухăçнелле тата кăнтăр-хĕвелтухăçнелле наступлени туса пыракан союзниксен çарĕсем нимĕçсен пехотипе танксене перекен артиллерийĕ вăйлă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та, Лимбург хули районĕнче минăсем лартса тултарнă вырăнсем урлă каçса, Эйпен хулипе Мальмеди хулине туртса илнĕ. Союзниксен çарĕсен чаçĕсем Эйпен хулинчен хĕвелтухăçнерехре Германи чикки урлă каçса кайнă. Союзниксен Арденри чаçĕсем Бастонь хулине илнĕ хыççăн Люксембург герцогствин çурçĕр пайĕнчи Клерво хули патне пырса тухнă. Мозель шывĕ улăхĕнче союзниксен чаçĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине пăхмасăр, çав шывăн хĕвелтухăç хĕрринчи плацдарма аслăлатнă.

Сентябрĕн 12-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ Шейд хули таврашĕнче тата Кобленц хули районĕнче Зигфрид линине атакăланă, çавăн пекех тата Германири ытти объектсемпе тăшманăн Голландири объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 13-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Италире, Флоренци хулипе Пистойя хулинчен çурçĕртерехре, Америкăпа Англи çарĕсем тÿпем районра çаплах малалла куçса пынă, халĕ вĕсем хăшпĕр тĕлте «Гот линийĕ» патне таччăнах пырса тухнă. Фронтăн Адриатика участокĕн сулахай флангĕнче 8-мĕш армири Англипе Инди чаçĕсем Аппенин районĕнче малалла кайнă, тăшман вĕсене хытă хирĕç тăрать.

Францире 7-мĕшпе 3-мĕш армисене кĕрекен Франци çарĕсен пысăк вăйĕсем Сена шывĕ çинче Шатильон хули патĕнче пĕр-пĕринпе пĕрлешнĕ, çапла вĕсем нимĕç çарĕсен Кăнтăр Франципе Хĕвеланăç Францирен Германи çĕрне чакмалли юлашки çулне пÿлсе лартнă. Шатильонран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Франци çарĕсем каллех питĕ хăвăрт малалла куçнă. Ку районра тăшман хирĕç тăни вăйсăрлансах пырать.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн Кăнтăр Германири тата Çурçĕр-хĕвеланăç Италири объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Ла-Манш çыранне тăшмантан тасатса пынă. Союзниксен çарĕсем Ньивпорт çывăхĕнчи Бэн ятлă çирĕплетнĕ пункта йышăннă. Бельгин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче союзниксем Альберт каналĕ хĕрринчи укрепление Геель еннелле аслăлатнă. Союзниксен ытти соединенийĕсем Альберт каналĕ урлă каçнă та, Голланди чикки патнелле кайса, çав чикĕ урлă каçса кайнă. Унтан кăнтăртарахра та — Маастрихт çывăхĕнче —Голланди чикки урлă каçса кайнă.

Союзниксен çарĕсем Люксембург хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра çитĕнÿсем тунă, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, Мозель шывĕ хĕрринчи плацдарма çирĕплетнĕ.

Сентябрĕн 13-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ Зигфрид линине, Нансипе Мец хулисем çывăхĕнчи тĕреклетнĕ пунктсене, нимĕçсен Голландири çулйĕрĕсемпе транспортне тата ытти объекчĕсене те пыра-пыра тапăннă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 14-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Италире 5-мĕш армин Англипе Америка чаçĕсем Флоренци хулинчен çурçĕртерехре «Гот линийĕ» патне пымалли вырăнсенче малалла куçса пынă, юлашки кунсенче тăшман унта вăйлăрах хирĕç тăма пуçланă. Адриатика секторĕнче 8-мĕш армин чаçĕсем малалла кайнă.

Францире Америкăпа Франци çарĕсем, тăшман хирĕç тăнине сирсе ярса, нумай тĕлте темиçе миля малалла кайнă. Франци çарĕн чаçĕсем Лангр хулине йышăннă, Марна шывĕн тури тăрăхĕнчи улăхра Шомон хули еннелле малалла кайнă. Унтан кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Грэ хулине тăшмантан тасатнă. Çав секторта чылай малалла кайнă. Бельфор çулĕнчен хĕвеланăçнелле наступлени туса пырса, Америка çарĕсем Виллерсексель хулине кĕрсе кайнă, тăшман чылай вăйлă хирĕç тăнине сирсе янă. Виллерсексельтен кăнтăртарахра Франци çарĕсем Пон-де-Руад хулине йышăннă, çав хулана тăшман питĕ хытă хÿтĕленĕ пулнă.

Туллимар даннăйсем тăрăх, союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи авиацийĕ 1.050 вĕçев ытла тунă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Германие тапăннă. Пуринчен те ытларах Франкфурт хулипе Штутгарт хулинчи объектсене атакăланă. Çавăн пекех тата Берлин çине те бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 13-мĕшĕнче Америка истребителĕсем Германи çинче нимĕçсен 33 истребительне персе ÿкернĕ тата çĕр çинче 20 истребительне пĕтерсе тăкнă. «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши бомбардировщиксем Мерзебургри тата Лейпциг çывăхĕнчи Лютценкдорфри синтетически горючи завочĕсене, çавăн пекех тата Людвигсхафенри синтетически горючи заводне тапăннă. Кунсăр пуçне тата Даймлер-Бенцăн Виндельфингер хулинчи (Штутгарт хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) грузовиксем тата авиаци моторĕсен пайĕсене тăвакан завочĕсене, Гумбольдт-Дейцăн Ульм хулинчи грузовиксемпе бронемашинăсем тăвакан завочĕсем çине, Ульм çывăхĕнче ларакан Вейсенхорн хулинчи нефтехранилищĕсем çине, Штутгартран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Швабиш-Раль аэродромĕ çине бомбăсем пăрахнă. Çав самолетсенчен 26 бомбардировщик тата 9 истребитель хăйсен базине таврăнман.

Болгарири лару-тăру

Болгари премьер-министрĕ Кимон Георгиев тÿхса каланă сăмах

СОФИЯ, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари премьер-министрĕ Кимон Георгиев ĕнер Софире радиопа сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Правительство власть пуçĕнче 48 сехет çеç тăрать-ха. Çак вăхăт хушшинче эпир кивĕ регент советне ĕçрен кăлартăмăр, мĕншĕн тесен ăна халăх шанман, эпир Болгари халăхне конституципе çирĕплетсе панă политикăллă правăсемпе ирĕклĕхсене тавăрса патăмăр, пичет ирĕклĕхне çĕнĕрен законлă туса хутăмăр тата цензурăна пĕтерсе лартрăмăр. Эпир 1941 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа власть пуçĕнче пулнă правительствăсен мĕнпур министрĕсене тытса хупрăмăр. 25-мĕш созыври халăх пухăвĕн депутачĕсене те, Болгарие пĕтес патне илсе çитернĕ политикăна пурнăçа кĕртсе пыма пулăшса тăнăскерсене, тытса хупрăмăр. Эпир Болгари халăхĕн ăс-тăнне пăсакан тата Болгари халăхне хирĕç пыракан политикăна пурнăçа кĕртсе пыракан мĕнпур хаçатсене пичетлеме чарса лартрăмăр. Эпир Украинăри 3-мĕш фронт командующийĕ армии генералĕ Толбухин патне мирлĕ делегаци ятăмăр. Пирĕн çĕршыва экономика, политика тата культура енчен лайăх çитĕнÿсем тума кансĕрлекен мĕнпур политикăллă чăрмавсене те пĕтерсе лартрăмăр, государствăн администраци аппаратне тата дипломатиллĕ ĕçсенче ĕçлекен çынсене тасатма пуçларăмăр. Тĕрлĕ çĕршывсенчен 15 посланнике каялла чĕнсе илнĕ ĕнтĕ.

Правительство çĕршыва çĕнĕрен конституци йĕркипе пурăнакан çĕршыв туса хучĕ. Çĕршывăн экономикăллă, социальнăй тата обществăллă пурнăçне çĕнĕрен ура çине тăратас тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле пулатьха. Эпĕ халăхăн мĕнпур сийĕсене правительство политикине ырласа пулăшма тата çĕршывра йĕркелĕхпе канăçлăх тытса тăрас ĕçре правительствăна активлăн пулăшма чĕнетĕп».

Болгарири регент совечĕн членĕсем радио тăрăх тухса калани

СОФИЯ, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер регент совечĕн членĕсем Цветко Бобошевский тата Тодор Павлов радио тăрăх тухса каланă. Вĕсем хăйсен сăмахĕсенче Болгари халăхне Болгарин çĕнĕ правительстви тавра таччăн пĕрлешме чĕннĕ.

БОЛГАРИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ТИТО МАРШАЛ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

СОФИЯ, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Софири радио пĕлтернĕ тăрăх, Болгари правительстви Тито маршала саламлă телеграмма янă. Çав телеграммăна премьер-министр Кимон Гиоргиев алă пуснă. Унта çапла каланă:

«Болгари халăхĕ тăванла Югослави халăхĕпе туслăн пурăнасшăн, Югослави халăхĕпе пĕрле Германи захватчикĕсене хирĕç кĕрешесшĕн. Болгари халăхĕ нумай вăхăт хушши кĕрешнĕ хыççăн тăванла славян халăхĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса яма тăрăшнă çынсене ĕçрен пăрса хучĕ. Болгари халăхĕ шутланă тăрăх, правительство çав преступникла политикăна пĕтерсе лартрĕ, пирĕн икĕ халăха пĕр-пĕринпе ĕмĕр туслăн пурăнмашкăн кирлĕ условисем туса пачĕ».

Болгарин çар министрĕ Дамян Велчев генерал-майор та Тито маршала телеграмма янă. Унта вăл çапла пĕлтернĕ: Болгарин Македонире кĕрешекен 5-мĕш армийĕн командующийĕ пулма эпĕ Кесеров генерала лартрăм, мĕнпур славян халăхĕсен тăшманĕ пулса тăракан Германи захватчикĕсене хирĕç пĕрлешсе кĕрешмешкĕн ăна Апостольский генералăн Македонири ирĕклĕх çарĕпе çыхăнма хушрăм, тенĕ.

Болгарин çар министрĕ Македонири ирĕклĕх çарĕн командующине Апостольский генерала та саламлă телеграмма янă. Унта вăл Болгарин 5-мĕш армийĕн командующине Кесеров генерала лартни çинчен тата ăна мĕнле ĕçсем хушни çинчен каласа панă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн штабĕ сентябрĕн 9-мĕшпе 10-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: вăрçă пыракан пĕтĕм территорире Югослави чаçĕсем çав çĕрсене оккупантсемпе сутăнчăксенчен тасатса пырассĕ, хуласемпе ялсене ирĕке кăларассĕ, нимĕçсене каялла чакма кансĕрлессĕ. Хĕвелтухăç Сербире ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем Тимок шывĕн пĕтĕм улăхне тăшмантан тасатнă, Хĕвелтухăç Сербири тĕп хулана—Заочар хулине штурмласа тытса илнĕ, çавăн пекех тата Княжевац хулине йышăннă. Печеневац тата Грделица çывăхĕнчи чугун çул кĕперĕсене сирпĕнтерсе янă. Хĕвеланăç Морава секторĕнче Байна Башта хулине ирĕке кăларнă.

Черногорире нимĕçсен Греципе Албанирен чакса пыракан дивизийĕсемпе хаярран çапăçассĕ. Герцеговинăра Югослави чаçĕсем усташасен вăйлă тĕреклетнĕ пунктне Фазлагича Кула хулине тытса илнĕ.

Хĕвеланăç Боснире çĕрле хаяррăн çапăçнă хыççăн Приедор хулине тытса илнĕ, çав хула гарнизонĕнче нимĕçсем, усташасем тата четниксем пурĕ 7.000 çын пулнă.

Хорватире ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем Славонска-Пожега хулине ирĕке кăларнă тата Ликра, Оточац хулинчен çурçĕртерехре, Дабар ятлă çирĕплетнĕ пункта тытса илнĕ.

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем Вране, Враньска-Банья, Владичин Хан, Яйце тата Бусовача хулисене йышăннă. Сербире Байна—Башта — Косьерич—Пожега секторĕнче ирĕклĕх çарĕн чаçĕсем недичевецсемпе Михайлович четникĕсен пысăк группировкине пуçĕпех аркатса тăкнă.

Рузвельтпа Черчиллĕн Квебек хулинчи канашлăвĕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, официальнăй представитель çапла каланă: паян Рузвельтпа Черчилль штабсен начальникĕсен Пĕрлешÿллĕ совечĕпе малтанхи хут канашлу туса ирттерессĕ. Ку канашлу Японие хирĕç пĕтĕм вăйпа вăрçмалли плансене хатĕрлесе памалла.

КВЕБЕК, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 11-мĕшĕнче каçхине, штабсен начальникĕсем пĕр-пĕринпе малтанлăха канашласа илнĕ хыççăн, Рузвельтпа Черчилль Квебекри конференцин тĕп ыйтăвĕсем тăрăх хăйсен штабĕсемпе пĕрле пĕр-пĕринпе официальнăй йĕркепе калаçма пуçланă. Официальнăй представитель каланă тăрăх, калаçусенче йышăннă пур решенисем çинчен те пĕрлешÿллĕ нацисен правительствисене çийĕнчех пĕлтерессĕ.

КВЕБЕК, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Кунта официально çапла пĕлтернĕ: Квебека Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительствин тинĕс-çар комиссийĕн пуçлăхĕ Эмери Ленд контр-адмирал килмелле, тенĕ. Вăл пароходсем çÿретессин ыйтăвĕсене, Лăпкă океанри вăрçăпа çыхăнса тăракан нисене, сÿтсе-явма килет пулмалла. Тата çапла пĕлтернĕ: Черчилль чĕннипе паян кăнтăрла Квебека Австралин Канадăри чрезвычайнăй уполномоченнăйĕ Вильям Глазгоу тата Çĕнĕ Зеландин Канадăри чрезвычайнăй уполномоченнăйĕ Фифт килмелле.

РУЗВЕЛЬТ КВЕБЕКРИ КОНФЕРЕНЦИ ÇИНЧЕН КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Квебекран пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельт секретарĕ Эрли пичет представителĕсене Рузвельтăн çак заявленине панă:

«Çак конференцин задачи — Лăпкă океанрипе Европăри вăрçăра Англипе Америка пĕрле мĕн тума пултарнине пурне те пурнăçа кĕртесси пулса тăрать. Эпир Китайра, Лăпкă океан çинче тата Европăра пулса тăнă лару-тăрăва шута илсе ĕçлетпĕр, хамăр ĕçсене хамăрăн союзниксен ĕçĕсемпе, уйрăм илсе кăтартсан — китаецсемпе вырăссен ĕçĕсемпе çыхăнтарса килĕштерсе пыратпăр».

Гитлера вĕлерме тапăннисене татăх суд тунă

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ 7 ПОЛИТИКА ДЕЯТЕЛЬНЕ ÇАКСА ВĔЛЕРМЕЛЛЕ ТУНĂ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Июль уйăхĕнче Гитлера вĕлерме тапăннă çынсен ĕçне пăхса тухма тунă «судăн çĕнĕ ларăвĕ» çинчен çырнă отчетпа Берлинра радиопа панă. Маларах пĕлтернĕ тăрăх, Гитлера вĕлерме тапăннă çынсен ĕçне малтанхи хут пăхса тухнă хыççăн Вицлебен генерал-фельдмаршала, виçĕ генерала тата ытти тăватă генерала çакса вĕлернĕччĕ.

Берлинри радио пĕлтернĕ тăрăх, хальхи ларура Гитлера вĕлерме тапăннă политика деятелĕсен ĕçне — Лейпциг хулин бургомистрĕ тата Германи правительствин хаксене сăнаса тăракан уйрăм уполномоченнăйĕ пулнă Карл Герделерăн, шалти ĕçсен министрĕ пулнă Гейсен-Вильгельм Лейшнерăн, прокурор пулнă Иозеф Вирмерăн, Римра посол пулнă Ульрих фон Гасселĕн, ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин советникĕ пулнă Тротт Цу Зольцăн, Берлин полицей-президенчĕ пулнă Гельдорф графăн тата депутат пулнă Пауль Леженюнгăн ĕçĕсене пăхса тухнă.

Берлинри радио çапла пĕлтерет: çав çынсем, Гитлера сирпĕнтерсе ярса, çĕнĕ правительство тăвасшăн пулнă. Рейхсканцлер вырăнне — Герделера, вице-канцеляр вырăнне—Лейшнера, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ вырăнне — фон Гасселя лартасшăн пулнă. Вĕсем Гитлера вĕлерес ĕçе хутшăннă генералсемпе тата офицерсемпе çыхăннă пулнă, влаçа тытса илес ĕçе Гитлера вĕлернинчен пуçарса яма хистесе тăнă.

ГЕРМАНИРЕ 300 ОФИЦЕРА АСАПЛАНТАРСА ВĔЛЕРНĔ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Свенска моргенбладет» хаçат çапла пĕлтерет: «Тĕрĕс хыпарсем тăрăх, Гитлера вĕлерме тапăннă пирки çакса вĕлернĕ 15 çынсăр пуçне, гестапо тата 300 аслă офицера асаплантарса вĕлернĕ».

Гитлеровецсем Эрнст Тельмана вĕлернĕ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта Эрнст Тельмана гитлеровецсем вĕлерни çинчен калакан хыпарсем çитнĕ. Влаçа Гитлер тытса илнĕ вăхăтранпах Эрнст Тельман Германире тĕрмере ларнă.

Гитлер пропаганди паян Берлинри радио тăрăх çакăн пек хыпар сарать: Тельман августăн 28-мĕшĕнче Веймар хули таврашне сывлăшран тапăннă чухне бомба лекнипе вилнĕ пулать. Гитлеровецсем Тельмана çав вырăнти Бухенвальдри концентрациллĕ лагерьте хупса усранă.

ЛАВАЛЬ ГЕРМАНИЕ ТАРНĂ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире тухакан «Трибюн де Женев» хаçат çапла пĕлтерет: Лаваль тата Виши «правительствин» Лавальпе пĕрле пулнă ытти членĕсем Фрейбурга тарнă, унтан вара таçта Германири Шварцвальда тухса тарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШЕМШЕРТИ КОЛХОЗ ШКУЛĔ

счетоводсен отделенийĕпе пахча-çимĕç отделенине вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчен тата пуçламĕш шкулсенчен вĕренсе тухнисене илессĕ.

5 уйăхра вĕрентсе кăларассĕ.

Вĕрентме çитес октябрĕн 1-мĕшĕнче тытăнассĕ.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: миçе çул вĕренни çинчен калакан свидетельство, хăш çулта çурални çинчен калакан свидетельство, колхоз е райзо панă командировка.

Заявленисене çак адреспа ямалла: Почт. отд. Акулево, Чебоксарского района. Акулевская колхозная школа.

Чебторга çакăн пек работниксем кирлĕ: суту-илÿ отделĕн начальникĕ, товароведсем, экспедиторсем, апат-çимĕç хатĕрлекен агентсем, склад заведующийĕсем, сутакансем, сторожсем, хуралçăсем, вĕренекенсем. Есукçи—калаçса татăлнă тăрăх. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 11, Чебторг.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактора́н — 0—67, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л Тираж 16.000 экз.

НТ 00392